# ĂСТА САТИРИК

ХХ ĕмĕрĕн 50-60-мĕш çулĕсенче чăваш литератури пур енлĕн аталанать. Чăваш çыравçисем хайлав хыççăн хайлав калăпласçĕ. Ытти мĕн пур жанрпа пĕрлех кулăш жанрĕ те хăйĕн çулне-йĕрне тупать. Ку жанрпа ĕçлекен çыравçăсен хисепĕ те палăрмаллах ӳсет. Вĕсен йышне Х. Уяр, Л. Агаков, Л. Таллеров, А. Кăлкан, А. Галкин, Н. Айзман хăюллă утăмсемпе пырса кĕреççĕ, кулăш жанрне уçă варкăш кĕртеççĕ, ăна çĕнĕ мелсемпе, сăнарсемпе тата характерсемпе пуянлатаççĕ. Вĕсем хăйсен тĕп тĕллевне – общество аталанăвĕнче тĕл пулакан бюрократсене, кахал-наянсене, ултавçăсене, йĕркелĕхе пăсакансене, тĕрлĕрен тумхахсемпе чăрмавсене тăрă шыв çине кăларассине, вĕсенчен йĕплесе, тăрăхласа, шахвăртса кулассине яланах малти вырăна хураççĕ, пурнăçра тĕл пулакан макăрмалли е тăрăхламалли пулăмранах кулăшла, илĕртӳллĕ, кăсăклă хайлав йĕркелеççĕ. Çыравçăсем хăйсен ĕçĕнче кулăш литературин тĕрлĕ формипе усă кураççĕ. Çивĕч фельетонсем, кулăшла калавсем, питлевлĕ сăвăсем, такмаксемпе юптарусем çине-çинех кун çути кураççĕ, халăх хушшинче çиçĕмле хăвăртлăхпа сарăлаççĕ. Кунта çакна та палăртса хăвармалла, кулăш литературине аталантарас ĕçре республикăра тухса тăракан хаçат-журнал пысăк вырăн йышăннă. Уйрăмах сатирăпа юмор журналĕн – «Капкăнăн», «Тăван Атăлпа» «Ялав» альманахсен тӳпи пысăк.

Чăваш кулăш литературинчи паллă ятсенчен пĕри – Х. Уяр. Уншăн кулăш тĕнчи нихăçан та ют пулман. Мĕн çамрăкран тытăнса ватлăх çулĕсемччен унăн шĕвĕр пери пурнăçри çитменлĕхсене пĕтерме, наянсемпе ханттарсене, суеçĕсемпе ултавçăсене, ĕмĕтсĕрсемпе икĕ питсене тӳрĕ çул çине тухма хистекен хайлав хыççăн хайлав шăрçалать. Ăста сатирик куçĕ тĕлне пулнă этемлĕхе хирĕçле пĕр ĕç те хут çине çырăнмасăр юлман пулĕ. Çавăнпах унăн хайлавĕсенчи сăнарсен йышĕнче ахаль хресченрен (çĕр ĕçченĕнчен) пуçласа пысăк пуçлăх (чиновник-бюрократ) таранах тĕл пулаççĕ.

Хветĕр Уяр уйрăмах 1950-60-мĕш çулсенче кулăш темипе пысăках мар калавсем нумай çырнă. Асăннă çулсенче çыравçă «Пирĕн енче» (1952), «Пулăçпа упа» (1957), «Пĕр сăмах» (1968) т.ыт. кулăшла калавсемпе очерксен, повеçсен кĕнекисене пичетлесе кăларнă.

Писатель-сатирикăн кулăшла хайлавĕсенчен ытларахăшĕнче эпир ĕçрен тарса çӳрекенсене, кахалсене, тӳрпилĕксене халăх умне илсе тухса намăслантарнине куратпăр. Акă «Тарăхнă така» калавах илер. Унти хитре инке – тӳр пилĕклĕ хĕрарăм. «Яланах яка тумланса çӳреме юратнăшăн, ĕç вăхăтĕнче пасартан пасара йăкăртатса чупнăшăн пĕрисем ăна ялта Яка аппа, теприсем Хитре инке тесе чĕнеççĕ». Çак Хитре инке ĕçрен яланах пăрăнса çӳренĕ, ĕçлеме тухсан та унран усă пулман. Ытларах чухне унăн хупăна пĕлмен çăварĕ ĕçлекен халăха чăрмантарнă çеç. Çавăнпа та ăна бригадир та, колхоз ертӳçи те ĕç хушманпа пĕрех. Пĕррехинче колхоз сурăхĕсене кĕтекен Хĕлип мучи чирлесе ӳкет те, ун вырăнне çын тупаймасăр хăшкăлаççĕ, вара ирĕксĕрех Хитре инкене хушаççĕ вырăхсене пăхма. Хальхинче те хушнă ĕçе тĕплĕн пурнăçламасть иккен Хитре инке. Халăх тăна кĕртейменнине така тăна кĕртет çав услапа. Ним айăпсăр вырăхха кӳрентерме тăрсан тарăхнă така ăна хăйне халăх кулли туса хурать. Ĕç вăхăтĕнче пасарта янккаса çӳренĕшĕн çав «ăслă» такана пула самаях питне хĕретме тивет Яка аппан. Вăл така сĕкесрен пытанса, пӳртрен тухмасăр çынсем патĕнче кун кунлать. Халăх, пуçлăхсем тăна кĕртейменнине чĕлхесĕр янавар ăна хăйĕн йăнăшне туйма вĕрентет.

«Пирĕн енче» калавра çыравçă колхозăн вăрçă вăхăтĕнчи йывăр пурнăçне кулăш урлă кăтартса пама тăрăшнă. Вăрçă вăхăтĕнчи «хуçасăрлăха» пула ял-ял таврашĕнче кашкăрсем йышлăн хунаса кайнă пулнă. «Тукмак хӳресем» апат шыраса колхоз фермисем патнех тухнă, нумай чухне хуçалăха пысăк сиен кӳнĕ. Çав тăват уралла тăшмансемпе халăх еплерех кĕрешнине кăтартса пани урлă тискер чĕрчунсен айванлăхне çыравçă тăван çĕр-шыв çине тапăннă нимĕç фашисчĕсен айванлăхĕпе танлаштарнăнах туйăнать. Сысна пăхакан Авка инке алтăрпах кашкăр çурине çапса пăрахнă... Фермăна пырса кĕнĕ кашкăр çурине вăл пăшалсăрах тытать. «Куçне сысна пăтти кĕнипе тухса тарма шăтăк тупайман та, Авка инке ăна хăвалаcа çитсе тепре хаплаттарнă». Иртĕхсе кайнă кашкăр çуринчен кулни кунта – Тăван çĕр-шыв çине тапăннă ирсĕр тăшманран кулниех. Çакна Авка инке хăйне кашкăр тытнăшăн панă премие танк тунă çĕре пани те çирĕплетет. Тепĕр тесен, колхоз вăкăрĕ те фермăрах кашкăр тытнă.

Йăваш, мĕскĕн, çав вăхăтрах тӳрĕ чунлă, пурнăçри пулăмсем çине таса чунпа пăхма хăнăхнă çынсем хăйсен йăвашлăхĕпе тӳрĕлĕхне пула тĕрлĕрен путишле ĕç-пулăма лекеççĕ («Пĕр сăмах», «Телейлĕ Палюк» калавсем).

«Пĕр сăмах» калаври Сильвестр сăнарĕ урлă автор ялта ӳснĕ, ялтах ĕçлесе пурăнакан йăваш та кăптăрмăш хусахсенчен шахвăртса кулать, вĕсене кăштах та пулин хăюллăрах, хастартарах пулма, пурнăç çине çĕнĕлле пăхма (халĕ ĕлĕкхи мар) хистет. Çав вăхăтрах ял çынни, ахаль хресчен йăвашлăхĕпе хăюсăрлăхне те кăтартать.

Сильвестр – ĕçчен те сăпайлă каччă, амăш хистенипе авланма шухăшлать. Вăл хăй тахçантанпах килĕштерсе пурăннă Марье официантка патне килет. Кунта та чĕмсĕрлĕхĕпе сăпайлăхне пула унăн ĕçĕ путланса ларас патнех çитет. Унăн тытталарăшĕ, шухăшлавĕ чăннипех те кулăшла пулса тухаççĕ. Вăл чун савнийĕ патне пырса калаçма вăтанать, пуринчен ытла Марье ăна тиркесрен хăрать. Пĕр сăмах калас тесе вăл икĕ эрне хушши сехĕрленсе пурăнать. Марьене килĕшес тесех вăл Чайнăй таврашĕнче тĕрлĕ ĕç пурнăçлать. Чутах тата «ĕçкĕçе» тухмасть. Хăюллăрах пулас тесе 100 грамм та сыпса пăхать. Кайран уншăн хăех ӳкĕнет, «ĕçке ярăнтăм» тет. Пирусне те çинçине, йӳнĕ тĕтĕмлине туртать вăл. Туртса ярайmасан сӳнтерет те кĕсйине каялла чикет. Майĕ пулсан çыннăнне туртма кăмăллать. Перекетлĕхĕпе пĕрлех хыткукарлăхĕ те пур унăн. «Ăçта унта... пирĕн укçапа... Паян çĕр грамм, ыран икçĕр. Усаллине хăнăхма часах ăна, – тет каччă. – Мĕн хĕрĕ пултăр ман, ĕçекен çыннăн. Эп тĕлĕкре те тĕлленмен, анне каламан пулсан...».

Сильвестрăн айванлăхне кăтартса паракан тепĕр сăлтав

вăл – Марьене хăйĕнчен пысăкрах ĕçри çын вырăнне хуни: «Ытла эс... Вăл служащи пекки-çке, таса ĕçри çын. Эпĕ – колхозник». Хăйне ним вырăнне те хумасть иккен хĕрĕхелле çите пуçланă Сильвестр. Ку вара сăпайлăхăн тӳнтер енĕ пек те туйăнать. Тĕп сăнарăн кашни хусканăвне, шухăш-туйăмне, ĕмĕтт ĕллевне вулакан кăмăлне хускатмалла çырса кăтартнипе вăл асра юлакан путишлерех те кăсăклă сăнар пулса тухнă. Чăнах та, каçса кайсах вулатăн калава, Сильвестр кунĕлĕхĕпе айванлăхĕнчен ăшшăн кулатăн, ăна ниепле те пулăшма май çуккишĕн пăшăрханатăн.

Çынсен пурнăçĕнче пулса иртнĕ кулăшла, мыскараллă ĕçсем пирки кăмăллăн шӳтлесе çырнă тепĕр калав вăл – «Телейлĕ Палюк». Палюк – тăнăç пурнăçа юратакан тӳлек те тирпейлĕ çын, тепĕр чухне ытлашширех те хăюсăр. Нимĕнле ăмсанулăхпа хапсăнчăклăх та çук унăн. Чăн-чăн ялти чăваш.

Çыравçă ĕлĕк чăваш хăюсăр та мĕскĕн пулнине, аслă вăрçă хыççăнхи çулсенче хресчен пурнăçĕ те çĕнелсе улшăннине кăтартса пама тăрăшать. Палюк мучи çак çĕнĕлĕхе курса ăса илнĕ май кулăшла, путишле ĕç-пулăмсем патне пырса тухать. Пĕр шухăшласан, калавра кулăшли темех çук та пек, апла пулин те Палюк шухăшлавĕ, калаçăвĕ-тыткаларăшĕнчен тухса тăрать иккен кулăшĕ. Палюк больницăра хăйне еплерех йышăнни пирки шухăшлани, çавăн пекех вăл хăйĕн хăюсăрлăхне тата çынна шаннине пула ухмаха» тăрса юлни, (хулари ултавçăсем «виççĕмĕш пулатăн-и» тесе Палюкран 5 тенкĕ укçа шăйăрса каяççĕ). Кунта çыравçă Палюк тавçăрулăхĕнчен тата сĕмсĕр ултавçăсенчен Палюк ăсĕпех кулать: «Шеллерĕ вăл мĕскĕнсене Палюк. Кур-ха эсĕ, мĕнле вăйпитти этемсем йĕке хӳрелле хăтланаççĕ. Вĕсем ват çынна мар, хăйсене улталарĕç.

«Хупахри тытăçу» калавра çыравçă тăван чĕлхене хисеплемен çынсенчен тăрăхлать. Янтул хăй чăваш пулсан та вырăсла калаçать, чăваш чĕлхине манмалла, чăвашсенчен ним усă та çук, вĕсене шăпăрпа шăлса Раççей тăрăх сапаласа ямалла тет. Ку калаçу хупахра пулса иртет, хупах хуçи те чăвашсене хисеплемест. Вăл вĕсене çын вырăнне те хумасть. Хупах хуçи хăй вырăс пулнă май чăвашах чăвашлăх пирки çавăн пек тиркевлĕн калаçнине итлесе тăрать-тăрать те çак мĕскĕн чунлă Янтула хисеплемиех пулса çитет. Хупахра эрех илсе хăйне усă кӳнине пăхмасăрах вăл Янтулпа тусне ӳппĕнтĕппĕн урама кăларса ывăтать. Чăваш чăвашлăха хисеплемест пулсан вырăс çынни чăваша хисеплессине кĕтсе लармалла маррине уççăнах систерет çыравçă хайлавра.

«Михайлов юр ăшĕнче тăна кĕчĕ. Вăл тăрса силленчĕ те юлташне тăма пулăшрĕ. Янтул çĕлĕксĕрех-мĕн. Ĕнсе хыçне, çанăсем ăшне юр кĕрсе тулнă. Çӳлтен те юр вĕçтерет, çил вĕрет. Янтул пуçĕ кĕçех шурă мĕлке пек пулса кайрĕ». «Тем пулчĕ Янтула, малтан вырăсла калаçаканскер, юр ăшĕнчен чакаланса тухнă–тухман вăл тăван чăваш чĕлхипе пуплеме пуçларĕ, çак пăтăрмахлă ĕç-пуç хыççăн вăл тăван тавралăх çине те юратуллă куçпа пăхма пикенчĕ, калаçăвĕнчен тăван халăхпа унăн культурине хисеплеме пуçлани курна пуçларĕ.

«Михайлов хаяр Янтул савăнса калаçнинчен тĕлĕнсе тăрать. Мĕскер улăштарчĕ ăна сасартăк.».

Шел пулин те, пирĕн хушăмăрта тăванĕсен, е хурăнташĕсен, е паллакан çыннисен витĕмĕпе, вĕсен ĕçри пысăк вырăнĕпе усă курса хăйсем валли пурлăх, чап, хисеп çĕнсе илес текенсем те йышлă-ха. Вăсем хăйсен несĕпсĕр кăмăлне тивĕçтерес тесе темле килпетсĕр ĕç тума та, май килнĕ чухне улталаса хăйсен çывăх çыннин шанăçне кĕме те вăтанса тăмаççĕ. Çавăн пек çынсене Х. Уяр чăтма пултарайман, вĕсене ăс вĕрентме, вĕсене шанакан çынсене тавçăрулларах пулма хистекен хайлавсем çырма тăрăшнă. Çавăн пек хайлавсен шутне «Пиччĕшĕпе шăллĕ» тата «Хаклă хăна» калавсене кĕртме пулать.

Тăванĕсем обществăри пысăк е чыслă вырăна йышăннипе, вĕсен ячĕ-сумĕпе усă курса юлас тесе Уçăппа («Пиччĕшĕпе шăллĕ»), Жан («Хаклă хăна») нимĕнле намăс-симĕсрен те хăраса тăмаççĕ. Этемлĕх чысĕпе таса чунлăхĕ, тӳрĕлĕхпе, çынлăх туйăмĕсем çак сăнарсен пачах та çуккă тейĕн. Куштан сăнлă, укçа-тенке юратакан, чее, ĕмĕтсĕр те сĕмсĕр Уçăп шăллĕ ят илнĕ паллă писатель пулнипе усă курса тĕрлĕ хура ĕç тăвать. Жан хăйне хурăн тăрринчен тăван лекекен паллă профессор хӳттипе машинăллă пуласшăн. Вăл Уçăп пек вăрттăн, куç хыçĕнче тумасть хăйĕн ĕçне, тăванĕн ячĕпе витĕнсе черетсĕрех лайăх машина туянма шут тытнине тӳрех, куçранах калать. Жан та Уçăп пекех сĕмсĕр те чее. Вăл хăй хăналанакан тăванĕ патĕнче хăйне килĕнчинчен те ирĕклĕрех тытать. Юлташĕсене чĕнме, вĕсене тăванĕ шучĕпех сăйлама та именсе тăмасть.

«Уçăп», ят илме ĕлкĕрнĕ çыравçă шăллĕ ялта ун патĕнче «каннипе» усă курса вăрман кăларать, анкартине пысăклатать, çĕр ĕçне тата кил-тĕрĕшĕнчи ытти нумай ĕçе пурнăçлать. Çав вăхăтрах шăллĕ пиччĕшĕ хăй ячĕпе вăрман кăларнине, анкарти çĕрне анлăлатнине пĕлмесĕрех юлать. Çакна вăл кайран отпуск хыççăн хулана таврăнсан, лесникпа колхоз председателĕ янă çырусенчен тин пĕлет. «Александровăн вăтаннипе çĕр тĕпне анса каяс килчĕ. Мĕнле намăс ăна!».

«Хаклă хăнара» Жан хăй хăналакан тăванĕ Иван Петрович профессор витĕмĕпе лайăх машина туянать, хăйне чаплăн кĕтсе илсе пăхса усранăшăн, машина туянма пулăшнăшăн тав тăвас вырăнне унран укçа, япаласем илсе тухса каять. «Çул çине тыткалама тесе, хаклă хăна Иван Петровичсенне пĕр витрине, фарфор турилккине, куркапа икĕ кĕмĕл кашăкне хурса кайрĕ. Алса тулне илчĕ. Хăйĕн хураласран Иван Петровичăн кивĕ костюмне тăхăнчĕ. Плащне хучĕ...».

Юлашкинчен «Çыру» калав пирки пĕр-ик сăмах Асăннă хайлав «Ĕçсĕр лариччен кĕрĕк арки йăвала» текен ваттисен сăмахне çывăх. Ним тумасăр, алла усса ларсан пĕр-пĕринпе хирĕçсе кайма та пулать иккен. Арман авăртманнипе хуралçă пӳртĕнче çĕр хута кĕтсе ларакансем: арман мельникĕ, вăлах хуралçи – Эрхип мучи, армана тырă авăртма килнĕ колхоз хуртхăмăрçи – Леврен старик тата Казак пичче арăмĕ Кулине инке – ахаль ларнипе чутах хирĕçсе каймаççĕ. Леврен Эрхип мучие арман авăртманшăн йĕплет, мельник çил-тăвăла айăплать т.ыт.те. Вĕсене хирĕçсе каясран Совет Союзĕн Геройĕ Тăлăх Иван патне телеграмма, каярах çыру çырни çăлса хăварать. Радиопа Иван Максимилианович Сироткин лейтенанта герой ятне панине пĕлтернĕ хыççăн вĕсем çав паттăр хăйсен ял çынни Тăлăх Иван пулнине пĕлеççĕ. Вара Ивана саламласа пурте пĕрле телеграмма, телеграммăра нимех те çырма çуккипе çыру, çырăвĕ ытла вăрăм пулнипе посылкăпа ямалăх ял хыпар-хăнарне çырса тултараççĕ. Писатель сĕтел хушшине вырнаçнă виçĕ çын еплерех ăшталанса ĕçленинчен, вĕсем пур вак-тĕвеке те туллин çырса пама тăрăшнинчен ахăлтатсах кулнăн туйăнать. Çапла тин çеç хирĕçĕве кĕрсе ӳкнĕ виçĕ çынна пĕр ĕç пĕрлештерсе, тăванлаштарсах ярать, вĕсем ĕçпе аппаланса çил-тăман чарăннине те, тул çутăлса килнине те, Левренe шыраса арăмĕ армана çитсе тăнине те сисмен. Арман çунаттисем мăнаçлăн çаврăна пуçласан Кулине инке тулли михĕсенне чупса пĕрмене йăтать, Эрхип мучи савăнăçлăн арманне ĕçлеттерет, Леврен вара тăрăшсах хурал пӳртĕнчи сĕтел хушшинче Иван патне çырнă вăрăм çырăва кĕскетсе куçарса çырать. Вăл халĕ сăмахсене цифрăпа улăштарать, капла кĕскерех те, меллĕрех те имĕш.

Х. Уярăн çӳлерех пăхса тухнă хайлавĕсене паян та халăх юратса вулать. Вăл хускатнă ыйтусем ĕмĕрлĕх, вĕсем ĕлĕк те, халĕ те яланах малти вырăнта пулнă, пулĕç те. Урăхла пулма та пултараймасть, мĕншĕн тесен пурнăç хăй çапла хушать.

**Николай ОСИПОВ, аспирант.**